# Ача-пăча библийĕ
Тăратаканĕ



# Ной тата пĕтĕм çĕре шыв илни

Çыравçи: Edward Hughes
Иллюстрацилекенĕ: Byron Unger; Lazarus
Alastair Paterson
Адаптацилекенĕ: M. Maillot; Tammy S.
Куçаруçи: www.christian-translation.com
Калăплакан компанийĕ: Bible for Children
www.M1914.org

BFC
PO Box 3
Winnipeg, MB R3C 2G1
Canada

©2021 Bible for Children, Inc.
Лицензи: сутса яриччен сирĕн çак халапа копилесе илме е пичетлеме ирĕк пур.





Ной Турра пуççапакан çын пулнă. Ыттисем пурте Турра курайман тата ăна итлемен. Пĕррехинче Турă аптраттарса ўкерекен сăмахсем каланă. “Эпĕ çак йĕркесĕр тĕнчене пĕтерĕп, - тенĕ Турă Ноя. - Санăн çемйў çеç çăлăнса юлĕ”.


Турă Ноя пĕтĕм çĕре шыв илесси пирки асăрхаттарнă. “Хăвăн çемйӳ валли тата нумай чĕр чуна вырнаçтарма çителĕклĕ йывăç ковчег, пысăк кимĕ, ту”, - тесе хушнă Ноя. Турă Ноя тĕрĕс хушусем панă. Ной ĕçе тытăннă!
3
Ной мĕншĕн ковчег тунине ăнлантарса панă чухне çынсем унран кулнă çеç.
Ной чарăнман. Вăл çынсене Турă çинчен те каласа панă. Анчах ăна никам та итлемен.
4
Нойăн çирĕп ĕненӳ пулнă. Çумăр унччен нихăçан та пулман пулин те, вăл Турра ĕненнĕ. Кĕçех ковчег хатĕр пулнă.
5
Унтан чĕр чунсем те çитнĕ. Турă çичĕ тĕрлĕ чĕр чӳн, унтан тата икĕ тĕрли илсе килнĕ. Кайăк-кĕшĕкĕ, тискер кайăкĕсем пысăкки те пĕчĕкки пурте ковчег патнелле туртăннă.
6
Тен, çынсем Ной чĕрчунсене тиенĕ чухне мăшкăлласа кулнă та. Вĕсем Турра хирĕç çылăх тума пăрахман. Вĕсем ковчега кĕме ыйтман та.
7
Çапла карап çине пур чĕрчунпа кайăк-кĕшĕк та пырса кĕнĕ. “Ковчега кĕр”, - тенĕ Ноя Турă. “- Эсĕ те, санăн çемйӳ те”. Ной, унăн арăмĕ, унăн виçĕ ывăлĕ тата вĕсен арăмĕсем ковчега кĕнĕ. Вара Турă алăка хупнă!
8


Унтан ҫумӑр ҫума
пуҫланӑ. Вӑйлӑ
ҫумӑр ҫӗре хӗрӗх
кун та хӗрӗх каҫ пӗр
чарӑнмасӑр йепетнӗ.
9
Шыв хуласемпе
ялсене тултарнӑ.
Ҫумӑр чарӑнсан тусем те
шыв айне путнӑ. Сывлӑшпа
сывлакансем пурте вилнӗ.
10
Шыв хӑпарсан, ковчег
ҫӳлелле ишсе тухнӑ.
Тен, шалта тӗттӗм пулнӑ,
тен, тирпейсӗр те, тен,
хӑрушӑ та пулнӑ пулӗ.
Анчах та ковчег Ноя шыв
илесрен хӳтӗленӗ.
11
Пилӗк уйӑхран Турӑ типӗтекен ҫил
янӑ. Ковчег майӗпен Арарат ҫуллӗ
тӑвӗ ҫинче чарӑнса тӑнӑ. Ной шыв
чакичченех шалта тата хӗрӗх кун
кӗтнӗ.
12
Ной ковчегӑн уҫӑ чӳречинчен ула куракпа
кӑвакарчӑна янӑ. Канма типӗ вырӑн тупайманнипе
кӑвакарчӑн Ной патне таврӑннӑ.
13
Тепӗр эрнерен Ной
тепӗр хут хӑтланса
пӑхнӑ. Кӑвакарчӑн хӑйӗн
сӑмсинче ешӗл олива ҫулҫи
илсе килчӗ. Тепӗр эрнере
Ной ҫӗр типсе ларнине пӗлнӗ,
мӗншӗн тесен
кӑвакарчӑн
таврӑнман.
14













Ной тата пĕтĕм çĕре шыв илни

Турă Сăмахĕнчи, Библири, халап

ра вырнаçнă

Пултарни 6-10

"Сирĕн Сăмахăрсен алăкĕ çутă парать."
Псалом 119:130

19




3 60

20

Библири çак истори пире хамăр тĕлĕнмелле Турă çинчен каласа парать, вăл пире пултарнă тата эсир ăна пĕлччĕр тет.

Эпир япăх ĕçсем тунине турă пĕлет. Çылăхшăн наказани-вилĕм, Анчах Турă сире питĕ хытă юратать, çавăнпа Вăл Хăйĕн Пĕртен-пĕр Ывăлне Иисуса Хĕрес çинче вилме тата сирĕн çылăхăрсемшĕн наказани пама янă. Унтан Иисус пурнăç патне таврăннă та киле, Пĕлĕте, кайнă! Эсир Иисуса ĕненетĕр пулсан тата çылăхăрсене каçарма ыйтатăр пулсан, вăл çавна тăвĕ! Вăл килĕ те халĕ сирĕнте пурăнĕ, вара эсир унпа ĕмĕр-ĕмĕр пурăнатăр.

Эсир ку чăнлăх пулнине ĕненетĕр пулсан, çакна турра калăр: Хаклă Иисус, эпĕ эсĕ Турă пулнине ĕненетĕп, çылăхăмсемшĕн вилме этем пулса тăтăм, халĕ Вара эсĕ каллех чĕрĕ. Тархасшăн, ман пурнăçа кĕр те ман çылăхсене каçар: эпĕ халех çĕнĕ пурнăçпа пурăнма, пĕррехинче санпа яланлăхах пурăнма пултарăп. Мана сана пăхăнса тăма, саншăн ачу пек пурăнма пулăш. Аминь.

Библие вулăр та Турăпа кашни кун калаçăр! Иоанн 3:16